25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ДЕКАБРЬ
12
ШĂМАТКУН
288(6223) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Финплана пур тӳлевсем енĕпе те тултарар

Сталин юлташăн Октябрьти докладĕпе приказĕ, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Сталинград патĕнче тата Центральнăй фронтра наступлени туса пыни пирĕн ĕçри çĕнĕ çĕкленĕве пуçарчĕç. Çулпуçăн сăмахĕсемпе Хĕрлĕ Çарăн çитĕнĕвĕсем çине промышленноçри рабочисем продукци туса кăларассине ӳстернипе, ялхуçалăхĕнчи ĕçхресченĕсем авăн çапса пĕтернипе, государствăна тырпул парса татнипе, фронта пулăшассине вăйлатнипе ответлеççĕ. Сталин юлташ хăйĕн докладĕнче партнă задачăсене пурнăçа кĕртес тесе, совет халăхĕ хăйĕн мĕнпур вăй-хăватне, пурлăхне тата укçи-тенкине мобилизацилет, вĕсене тăшмана çĕнтерес тĕллевпе усă курать.

Халăх хуçалăхне аталантарнă çĕрте укça-тенкĕ яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă. Халĕ, отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче, промышленноçпа транспорта, социализмлă ялхуçалăхне яланхинчен пысăк хăвăртлăхпа ĕçлеттернĕ чухне, фронта кирлĕ кĕçпăшала, боеприпассене тата апат-çимĕçе уйăхран уйăха нумайрах туса кăларнă чухне, укçа-тенкĕ вырăнĕ татах та пысăкланчĕ, вăл ытларах кирлĕ пулса тăчĕ.

Çавăнпа та пирĕн финанс работникĕсем умĕнче питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Вĕсем социализмлă бюджетăн пур мероприятийĕсене те, уйрăмах çĕршывăн оборонипе çыхăннă мероприятисене укçа-тенкĕ çителĕклĕ парса тăма тивĕçлĕ. Финанс органĕсем тĕрĕс-тĕкĕл ĕçленинчен, вĕсем çĕршыва укçа-тенкĕ мĕн таран нумайрах панинчен пирĕн халăх хуçалăхĕпе Хĕрлĕ Çар валли продукци туса кăларас ĕçĕн, пирĕн фронтри кĕрешĕвĕн ăнăçлăхĕ килет.

Чăваш республикинчи чылай финанс органĕсем, хăйсен умĕнче тăракан пысăк задачăсене ăнланса, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçлеççĕ. Вăрмар, Ишлей, Шупашкар, Шăхасан, Советски тата Сĕнтĕр районĕсенчи финорганĕсем укçа-тенкĕ пухмалли плана кварталтан квартала срокчен тултараççĕ. Виççĕмĕш кварталти финплана республикăри 26 район ирттерсе тултарчĕç. Финанс работникĕсен республикăри социализмлă ăмăртăвĕнче 3-мĕш кварталта мала тухнăшăн Шăхасан районĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе пĕррĕмĕш премине (12 пин тенкĕ), Çĕрпӳ районĕ — иккĕмĕш, Елчĕк районĕ виççĕмĕш премисем илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Иртнĕ кварталти çитĕнӳсене çирĕплетсе, чылай районсем çак кварталта та начар мар ĕçлеççĕ. Çак кварталти плана декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Вăрмар районĕ 88,7 процент, Шăхасан районĕ 87,4 процент, Шупашкар районĕ 82,8 процент тултарнă.

Анчах пур пек çитĕнӳсемпе лăпланса ларма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен финанс органĕсен туса çитермен ĕçсем нумай-ха. Юлашки квартал вĕçленнипчен шутлă кунсем юлчĕç. Унччен 1942 çулти финплана пĕтĕмпех, пур тӳлевсем енĕпе те, çĕнĕ çул тĕлне пĕр парăм хăвармасăр тултарас пулать. Çакна тăвас пулсан, финанс работникĕсем мĕнпур тимлĕхпе ĕçлени, юлнă вăхăтпа пĕлсе усă курни, партипе совет организацийĕсем вĕсене тăтăшах пулăшса тăни кирлĕ.

Анчах хăшпĕр районсенче юлашки вăхăтра укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлатас вырăнне сӳрĕклетни палăрать. Улатăр районĕ, сăмахран, 1942 çулти малтанхи виçĕ кварталта финплана срокчен тата ытлашшипех тултарса пычĕ. Тăваттăмĕш кварталти плана вара, республика 66,4 процент тултарнă вăхăтра, 40,1 процент кăна тултарчĕ. Ĕç çакăн пек сӳрĕкленсе пынине Красноармейски районра та курма пулать. Вăл, малтанхи кварталсенче начар мар ĕçленĕскер, юлашки кварталти плана 42,4 процент çеç тултарнă. Укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе, çавăн пекех, халĕ Первомайски, Çĕмĕрле, Чкаловски, Елчĕк, Калинински районсем юлса пыраççĕ.

Асăннă районсенчи финанс пайĕсемпе перекет кассисен заведующийĕсем укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе кашни кун тимлĕн ĕçлес вырăнне, çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса лараççĕ, налог инспекторĕсемпе агенчĕсен ĕçне тĕрĕслесех тăмаççĕ, вĕсен социализмлă ăмăртăвне организацилесе ертсе пымаççĕ. Çавăн пекех вăл районсенче финанс ĕçне халĕ çеç тытăннă çамрăк работниксене пулăшни, ялсенче массăллă-ăнлантару ĕçне анлăн туса пыни çук. Налог тӳлес енĕпе декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Улатăр районĕ 120 пин тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай районĕ 141 пин тенкĕ парăмра тăни çавăнтан килет ĕнтĕ.

Халăхи вăхăтра çĕршыв умĕнче парăмлă пулни — питех те килĕшӳсĕр ĕç. Асăннă районсенчи парти, совет тата финанс работникĕсен çак çитменлĕхе халех пĕтерес пулать, çĕнĕ çулччен пур парăмсене те тӳлесе татмалла тăвас пулать. Кашни район, кашни ялсовет, колхоз тата кашни хуçалăх государство умĕнчи хăйĕн парăмĕсене срокра тӳлесе татăр.

Агитаторсемпе вулавçăсен, ялти активистсен тата финанс работникĕсен халĕ тӳлев енĕпе юлса пыракан çынсем хушшинче ытларах ĕçлемелле, вăрçă вăхăтĕнче налога вăхăтра тӳлеменни е унтан пăрăнни — тăван çĕршыв умĕнче айăпа кĕни пулни çинчен вĕсене ăнлантарса памалла.

Финанс работникĕсен тепĕр черетлĕ ĕçĕ вăл—халăх хушшинчи укçа-тенке перекет кассине хуртарасси, вкладчиксен йышне ӳстересси пулать. Çак на май, перекет касси работникĕсем государство заемĕсен выляввĕсене çийĕнчех палăртса тӳлесе тăни, заем уссине туйма пани кирлĕ.

Хăшпĕр районсенче хуçалăха, пурлăхсене, пурнăçа тата ытти сене те ирĕклĕн страхлас ĕçе хакламаççĕ, ун çине сахал çаврăнса пăхаççĕ. Çак çитменлĕхе халех пĕтерес пулать, ирĕклĕ страховани енĕпе укçа пухассине анлăнрах сарса ярас пулать. Мĕншĕн тесен çак ĕç çĕршыв оборонине сахал мар укçа-тенкĕ парать.

Умра — çĕнĕ, пин те тăхăрçĕр хĕрăх виççĕмĕш çул. Çĕршыври ĕççынисем çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Çак кĕрешӳре финанс работникĕсен те малти вырăнта пулмалла, вĕсен 1942 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни район, ялсовет, колхоз тăрăх, кашни тӳлев тăрăх тултармалла, 1943 çул валли парăм хăвармалла мар.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕ промышленноçри работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ пирĕн республикăри ВОЛОДИН юлташ главнăй инженер пулса тăракан завода ВИÇÇĔМĔШ ПРЕМИ пама йышăннă.

Обязательствăсене срокчен пурнăçлаççĕ

ЭЛЕК. Хирлешпуç ялсоветне кĕрекен колхозсенчи ĕççыннисем фронтпа тăван çĕршыва аш-какай, сĕт-çу тата ытти апат-çимĕçсем ытларах пама тăрăшаççĕ, государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татаççĕ. «Заветы Ильича» колхоз членĕсем аш-какай, сĕт-çу, çăм, çăмарта т. ыт. те сентябрь уйăхĕнчех парса татнă. Урицкий ячĕпе тăракан колхоз членĕсем фронтри пек ĕçлемелли çирĕмкунлăхра государствăна тырпул парса татрĕç, ытти обязательствăсене те пурнăçланă. «Красный Октябрь» колхоз кăçалхи çулшăн аш-какай парса татрĕ, 1943 çулшăн 14,68 центнер пачĕ. Ку колхозри колхозниксем те государствăпа 1943 çулшăн аш-какай пама пуçларĕç. Тĕслĕхрен, П. Касмаков колхозник 1943 çулшăн аш-какай парса татнă, Р. Кустиков 78 килограмм, Т. Николаевпа М. Митрофанов 25-шер килограмм панă.

М. КУСТИКОВ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçласа ячĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр.). Районри чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешӳ пуçласа ячĕç. Районра малта пыракан «Победа» колхоз (председателĕ И. Федоров юлташ) 18 центнер вăйра вăрăлăх, 79 центнер çĕлĕ вăрăлăхне сортласа хатĕрленĕ.

Колхозра ялхуçалăх машинисене юсас ĕç те аван пырать. Колхозăн тимĕрçи М. Иванов юлташ кашни кун пĕрер плуг юсать. Вăл 8 плугран тăваттăшне юсаса пĕтернĕ ĕнтĕ. Колхозăн пĕр сеялка пур. Ăна та юсаса хатĕрленĕ. Сӳресем ĕçе хатĕр. Тырă амаллăх вырăна колхоз 200 лав тислĕк кăларнă. Хирте кăлармалăх хатĕрленĕ тислĕк татах та пур.

С. ШАДИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Декабрĕн 8-мĕшĕнче Сталинград патĕнче противникăн малтан кăтартнă пек 24 транспортнăй самолетне мар, 29 транспортнăй самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Декабрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 танкне çити тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 10 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальон таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем, вак ушкăнсене уйăрălса кĕрешсе, противникăн дзотчĕсемпе блиндажĕсене çавăра-çавăра илсе çĕмĕрсе пынă. Хулан кăнтăр кĕррине пирĕн подразделенисем тăшманăн окопĕсене вăркăнса кĕрсе кайса, малалла куçнă. Нимĕçсем хăйсен позицийĕсене каялла тытса илес тесе темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен контратакисене сирсе янă, нимĕçсен пехотине икĕ рота ытла пĕтерсе тăкнă тата противникăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн хаяр контратакисене сирсе тăнă тата уйрăм участоксенче наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен тĕреклетнĕ позицийĕсене йышăнса илсе тăшманăн 300 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейĕсем тытса илнĕ: 5 оруди, 19 пулемет, 13 миномет, боеприпассем тиенĕ 8 автомашина, радиостанци, 3 пин снаряд тата 305 пин патрон. Тепĕр участокра противник пĕр полка çити пехота вăйĕпе тата 40 танк пулăшса пынипе Н-ски чаçĕн позицийĕсене атакăланă. Каçалапа пирĕн боецсем гитлеровецсен контратакисене сирсе янă. Çапăçура нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотине икĕ рота ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем уйрăм участоксенче противникпа активлăн çапăçнă. Туллимар даннăйĕсем тăрăх, пĕр кун хушшинче нимĕçсен 400 çити салтакĕпе офицерне, 2 танкне, 42 пулеметне, 7 орудине, 16 автомашинине пĕтерсе тăкнă тата 96 дзотĕпе блиндажне ишĕлтернĕ. Пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Фронтăн Центральнăй участокĕнче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене çирĕплетнĕ тата хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра пирĕн подразделенисем тăшман пехотин пĕр батальонне çапса аркатнă. Нимĕçсен 350 салтакпа офицер таран вилнĕ. Йышлă трофейĕсем тытса илнĕ. 90 нимĕç салтакĕ тыткăна парăннă. Тепĕр участокра противник, совет войскисене малалла кайма чарас тесе, пехотăн йышлă вăйĕсене тата 70 танка контратакăна янă. Пысăк сухатусем тӳссе, вăл пăртак малалла куçнă. Нимĕçсем ĕçе малалла ăнăçтарас тесе тăрăшнине пирĕн чаçсем активлăн çапăçса пăчлантарса лартнă. Çав çапăçусенче нимĕçсем чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк сухату тӳснĕ тата çапăçу хирĕнче хăйсен тэрсе çĕмĕрнĕ тата çунтарса янă 42 танкне пăрахса хăварнă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 9 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, пирĕн зенитнăй артиллери противникăн 2 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен отрядри партизансен ушкăнĕ икĕ эрне хушшинче 162 нимĕç салтакне, 9 офицерне вĕлернĕ, 17 автомашинăна тата çар пурлăхĕ тиенĕ 3 лава пĕтерсе тăкнă. Партизансем çав вăхăт хушшинчех противникăн 4 поездне ӳпĕнтерсе янă. Партизансен тепĕр отрячĕ, засадăсенчен персе, 5 кун хушшинче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 29 çынна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра нимĕçсен 343-мĕш охраннăй батальонĕн командирне Герберт Крауснік майора тыткăна илнĕ. Майор çапла каласа панă: «Нимĕç салтакĕсем вырăс хĕлĕнчен хăраççĕ, теççĕ. Çапла калани вăл пĕрпайăн çеç тĕрĕс. Салтаксем ытларах вырăс пехотинчен хăраççĕ, çавăн пекех офицерсем те шикленеççĕ. Нимĕç салтавĕсем шухăшланă тăрăх, хĕл вăл йывăр çапăçусемпе тата ирĕксĕрех каялла чакма тивнипе таччăн çыхăнса тăрать. Иккĕлленме-ӳкĕнме тытăннин тата ывăннин паллисем салтаксем хушшинче çеç мар, нимĕç командованийĕн пĕр пайĕнче те палăраççĕ. Ку çеç те мар-ха. Офицерсенчен пĕр пайĕ Германия ку вăрçăра тахçанах поражени тӳснĕ тесе шутлаççĕ. Германия вăл «блицкриг» пăчланса ларни, «çиçĕм пек хавăрт çĕнтересси» пĕтсе ларни паллă пулсанах поражени тӳснĕ, эпир шăп çавăн пек çĕнтерӳ çине шанса тăнăччĕ. Халĕ ĕнтĕ Гитлер тапăклăнах поражени тӳсессине мĕнле те пулин нумай вăхăта тăсасчĕ тесе тем пекех тăрăшать. Вăл мĕн те пулсан ăнсăртран килсе тухса тата кунçулăн тĕрлĕ кукăр-макăр ĕçĕсем çине шанса тăрать. Хаяр чăн-чăн шурнăç çак тĕтре пек шанчăксене йăлтах сапаласа ярĕ».

* * *

Француз çарĕн киле салатма тивĕçлĕ офицерĕсемпе салтакĕсем нумайĕшĕ регистрацирен пăрăнса юлма тăрăшаççĕ, хăйсен хĕçпăшалĕсене памаççĕ. Авиньон районĕнче патриотсем çар казармисене вут тĕртнĕ те, çынсем пăтрашса кайнипе усă курса, хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай илсе кайнă.

Декабрĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра пирĕн войскăсем малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн подразделенисем, вак группăсене уйăрălса кĕрешсе, противникăн дзотчĕсене пĕтерсе пынă тата огневой точкисене пусарса тăнă. Тăшманăн вуншар укрепленине вĕсенчи гарнизонсемпе пĕрлех аркатса тăкнă. Хулан кăнтăр хĕрринче пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтернĕ, 4 оруди, 9 пулемет тата 3 миномет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă тата противникăн контратакисене сирсе тăнă. Сафонов юлташ ертсе пыракан подразделенисем нимĕçсен окопĕсене кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем штык вĕççĕн тăрса çапăçса нимĕçсене вĕсем йышăннă позицисенчен хăваласа кăларнă. Окопсемпе траншейăсенче нумай гитлеровец вилсе юлнă. Тепĕр участокра совет чаçĕсем противникăн темиçе контратакине сирсе янă, нимĕçсен 7 танкне тата пĕр батальон ытла пехотине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски часть нимĕçсен контратакине сирсе янă. Противник çапăçу хирĕнче хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 160 виллине пăрахса хăварса каялла чакнă. Тепĕр участокра пирĕн 6 боец тата гварди лейтенанчĕ Беззубик пĕр высотана хӳтĕлесе тăнă. Противник пехотин пĕр роти темиçе хут та атакăланă, анчах кашни хутĕнчех ăна пирĕнисем каялла сирсе янă. 7 гвардеец 80 гитлеровец таран вĕлерсе тăкса, çак рубежа хӳтĕлесе хăварнă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă позицисене тĕреклетнĕ тата хăйсен вăйĕсен пĕр пайĕпе наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра совет чаçĕсем гитлеровецсен хирĕç тăмалли узелне çапса аркатнă, нимĕçсен пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă. 6 оруди, 27 пулемет, радиостанци, 4 автомашина тата ытти трофейăсем тытса илнĕ. Великие Луки районĕнче нимĕçсем Н-ски чаçăн позицийĕсене виçĕ хутчен атакăланă. Противникăн гур атакисене те сирсе янă, ăна пысăк сухатусем тӳстернĕ.

* * *

Украинăри партизансен отрячĕ 20 кун хушшинче тăшманăн 970 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Партизансем нимĕçсен 5 бронемашинине, 17 грузовой автомашинине, 22 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 20 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата 2 чугунçул станцине аркатса тăкнă. Партизансем пĕр оруди, пĕр миномет, 3 автомашина, 2 радиостанци, 20.000 патрон тата тĕштырăпа продуктсем нумай тытса илнĕ, вĕсене нимĕçсем халăхран çаратса илнĕ пулнă. Нимĕçсенчен туртса илнĕ çав продовольствин пысăк пайне халăха салатса панă.

* * *

Çакă паллă: фашистла Германи экономикин вăйран тухса ĕçleme тивет. Нимĕç командованийĕ хăйĕн ĕçĕсене нимĕçсем тытса илнĕ совет районĕсенчи промышленность шучĕпе юсаса яма шутланă пулнă. Анчах та гитлеровецсен çав планĕ вăл супăнь хăмпи пекех сӳнсе ларнă. Совет влаçĕсем фабрикăсемпе заводсен, шахтăсемпе рудниксен мĕнпур оборудованине вăхăтра ытти çĕре куçарнă, илсе тухма пултарайманнине пĕтĕмпех юрăхсăра кăларнă. Фактсем çавăн пек ĕнтĕ. Анчах та гитлерла пропаганда халĕ сасартăк нимĕçсем оккупациленĕ совет районĕсенче экономика тĕлĕшпе тунă çитĕнӳсемпе мухтанма тытăннă. Çапла, акă, гитлеровецсем Литвари радиостанцисем урлă çакăн пек пĕлтерӳ сарнă: «Хĕвелтухăçĕнчи облаçсенче ремонтнăй мастерскойсемпе ытти предприятисене çĕнĕрен хута янă. Пĕр трактор заводĕ кĕске вăхăтрах 40.000 трактор ытла туса кăларнă», тенĕ. Çав пĕлтерĕвĕн авторĕсем Крыловăн баснинчи суеçĕ пек пулса тăнă, басняри суеçĕ вăл Римра ту пысăкĕш хăяр курнипе мухтаннă. Çакă пуриншĕн те паллă: нимĕç войскисем вăхăтлăха тытса илнĕ территори çинче тракторсем тăвакан пĕр завод çеç пулнă. Сăмах кунта Харьковри завод çинчен пырать. Çав хулана нимĕçсем тытса иличчен нумай малтан трактор заводĕн мĕнпур оборудованине хĕвелтухăçнелле илсе кайнă. Темиçе уйăх каялла Харьковри трактор заводĕ çĕнĕ вырăнта Хĕрлĕ Çар валли продукци туса кăларма тытăннă. Çакăнтан паллă ĕнтĕ: нимĕçсем çав трактор заводне çĕнĕрен хута яма пултарайман, хута яман та. Çавăнпа та 40 пин трактор, завод туса кăларнă тенĕскерсем, вĕсем гитлеровецсен чирлĕ пуçĕнче çеç пур. Паллах ĕнтĕ, çав тĕнчере çук тракторсемпе ялала турттарма та, сухалама та çук.

Танксен колоннисене тăвас ĕçе кашни колхозник хутшăнтăр

100.492 тенкĕ пухнă

ИШЛЕЙ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станцин коллективĕ фронта пулăшас шухăшкăмălпа пурăнать. Сталин юлташăн хĕрӳллĕ сăмахĕсемпе хавхаланса, МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлă колоннине тума кĕске вăхăт хушшинчех 100.492 тенкĕ укçа пухрĕç. Ку ĕçе уйрăмах 9-мĕш, 10-мĕш тата 3-мĕш бригадăсем организованно ирттерчĕç. Тракторсен 9-мĕш бригади танксен колоннине тума 13.360 тенкĕ пухнă. Трактор бригадин бригадирĕ ВКП(б) членĕн кандидачĕ Тимофей Ефимов çак ĕç валли чи малтан хăй 2.700 тенкĕ панă. Ун хыççăн комбайнер Родионов юлташ 2.000 тенкĕ, трактористка К. Ефимова—1.500 тенкĕ пачĕç. Çавăн пекех трактористсен 10-мĕш бригадин бригадирĕ Антон Горшков 2.000 тенкĕ, трактористка, «Социализмлă ялхуçалăхĕн отличникĕ» значока илнĕ комсомолка М. Толстова 1.500 тенкĕ пачĕç.

Производствăри ĕç те пысăк çĕкленӳпе пулса пычĕ. МТС коллективĕ 1942 çулта тракторсен вăйĕпе тумалли ялхуçалăх ĕçĕсен планне 107 процент тултарнă. Нумай пулмасть трактористсемпе комбайнерсем канашлура ялхуçалăх ĕçĕн итогĕсене сӳтсе яврĕç. Унта вĕсем Сталин юлташăн историллĕ сăмахĕсене тата Хĕрлĕ Çарăн Сталинград районĕнчи тата Центральнăй фронтри çĕнтерĕвĕсене ответлесе çитес çуракине тимлĕн хатĕрленме пулчĕç.

Д. МИХАЙЛОВА,
МТС политотдел начальникĕн заместителĕ.

ИКĔ РАЙОН—ИКĔ ТĔСЛĔХ

Октябрьски район Чкаловски районри „РОКК“ колхоз чухлĕ çеç пухнă

Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсем перекетленĕ укçа-тенкĕпе Хĕрлĕ Çар валли танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума укçа-тенкĕ пухас тĕлĕшпе пуçарнă патриотизмлă ĕçе Чкаловски районри ĕççыннисем пысăк ăнăçлăхпа туса пыраççĕ. Декабрĕн 10-мĕшĕ тĕлне вĕсем государство банкĕн районри уйрăмне танксен «Колхозник Чувашии» ятлă колоннине тума 622.000 тенкĕ, танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума 71.000 тенкĕ укçа хывнă. Çак ĕç валли Чкаловскинчи «Звезда» колхоз членĕсем 22.000 тенкĕ, Кзыл Чишмери «Маяк», Туçари «Çăлтăр» колхозсен членĕсем — 25.000-шер тенкĕ, Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем 28.000 тенкĕ пухнă. Улатăр районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар валли танксен колоннисене тума хăйсене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе памалли тупăшран 100 пин тенкĕ уйăрса пама йышăнни çинчен пĕлсен, «РОКК» колхоз членĕсем çак ĕç валли 73 пин тенкĕ укçа пухнă.

Анчах çак ырă пуçарăва Октябрьски район руководителĕсем тивĕçлипе хакламан, колхозниксене танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе мобилизацилемен, ку ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанса пурăннă. Çавăнпа Октябрьски район танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пурĕ те 75.000 тенкĕ çеç пухнă. Çакă вăл Чкаловски районри «РОКК» колхоз членĕсем пухнă чухлĕ çеç.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Алексеев юлташ танксен колоннисене тума укçа пухас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсен шутне «Красный Октябрь», «Путь коммунизма», «Туйташ» тата «Красное Сормово» колхозсене кĕртет. Вĕсем танксен колоннине тума 4.000 тенкĕрен пуçласа 7.000 тенке çити пухнă. Районра 75 колхоз, вĕсенчен 25-шĕ танксен колоннине тума пĕр пус укçа та пухман.

— Çак колхозсенче танксен колоннине тума укçа пухас ĕçе организацилес тĕлĕшпе ВКП(б) райкомĕ мĕнле мерăсем йышăннă, — тесе ыйтсан, Алексеев юлташ çапла ответлет: «Колхозсене каякан уполномоченнăйсене ку ĕçе организацилеме хушнăччĕ тата колхоз председателĕсен канашлăвĕсенче кун пирки калаçнăччĕ, анчах, хăвăрах куратăр, вĕсем ку ĕçе организацилемен»... ВКП(б) райкомĕ тата пуçламĕш парторганизацисем çак фактсене курса тăнă, анчах ĕçе организацилес пирки нимĕнле мерăсем те йышăнман, Кольцовка колхозникĕсен лайăх пуçарăвне сарман.

Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе ялсоветсемпе колхозсен председателĕсем начар ертсе пыраççĕ. Пукаш ялсоветĕнче, сăмахран 3 колхоз. Ялсовет исполкомĕн председателĕ Шишаров, комсомол организацисен секретарĕсем Охилькова Лобанова ку таринччен ях танксен колоннине тума укça пухас ĕçе тытăнман.

Ĕç хăй тĕллĕн пулассине шанса пурăннă çĕрте

КАЛИНИНО. Районри хăшпĕр колхозсенче танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума укçа-тенкĕ пухас ĕç сӳрĕккĕн пырать. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ тата ялсоветсемпе колхозсен руководителĕсем Кольцовкăри колхозниксен пуçарăвне колхозниксем патне вăхăтра çитермен, ку ыйтăва ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса паман, танксен колоннине тумашкăн укçа-тенкĕ хăй тĕллĕн пухăнасса кĕтсе пурăннă. Çавăнпа районра танксен колоннине тума çĕршер тенкĕ çеç пухнă колхозсем те пур. Акă Шăнакассинче çак ĕç валли пурĕ те 200 тенкĕ çеç пухнă.

Чăрмавĕ кунта колхозниксенче мар, вĕсене ертсе пыракансенче.

Укçа-тенкĕ пухнă çĕре хутшăнмасăр пĕр колхозникпе колхозница та тракториспа комбайнер та ан юлтăр!

Çулпуç сăмахĕсем отлично вĕренме чĕнеççĕ

Калининори педучилищĕре вĕренекенсем Сталин юлташăн докладне сӳтсе яврĕç. Кун хыççăн вĕренӳ пахалăхĕпе дисциплинăна татах та ӳстерме обязательствăсем илчĕç. Малтанхи вăхăтсенче М. Кротков, Л. Щукина, А. Филиппов вĕренекенсем вĕренӳре кая юлса пыратчĕç. Халĕ çулпуçăн историллĕ сăмахĕсене сӳтсе явнă хыççăн, «отлично» та «хорошо» паллăсемпе вĕренсе пыракан пулчĕç.

Г. АНДРЕЕВ.

Великие Луки районӗнче

ЦЕНТРАЛЬНАЙ ФРОНТ, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Великие Луки хулинчен хӗвелтухӑçнерехри вырӑнта çапӑçусем кӑнтӑрла та, çӗрле те лӑпланмаççӗ. Тӑшман вӑйлӑн хирӗç тӑнине çӗнтерсе пырса, унӑн контратакисене сире-сире пӑрахса, пирӗн чаçсем хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатаççӗ, вырӑнӗ-вырӑнӗпе малалла тапӑнса пыраççӗ. Тӑшман пысӑк çухатусем тӳсет.

Хӗрӳллӗ çапӑçу хыççӑн пирӗн подразделени нимӗçсен тӗреклетнӗ пӗр пунктне йышӑнса илнӗ. Фашистсем, çав пункта каялла тавӑрма шутласа, çине-çинех темиçе контратака тунӑ. Анчах совет боецӗсем тӑшмана кашнинчех сире-сире ывӑтнӑ.

Взвод командирӗ амансан, подразделенине командир пулса ертсе пырас ӗçе старши сержант Осипенко хӑй çине илнӗ. Гитлеровецсем чаçах взвод çине йышлӑрах вӑйсемпе пырса тапӑннӑ. Пӑшалсенчен вӑйлӑн персе тӑнӑ хыççӑн, Осипенко хӑйӗн боецӗсене тӑшманпа штык вӗççӗн тӑрса çапӑçма çӗкленӗ. Красноармеецсем хастарлӑ тапӑннине кура, гитлеровецсем тарма тытӑннӑ. Боецсем, гитлеровецсем хыççӑн йӗрлесе пырса, вӗсене чылай аякка сирсе пӑрахнӑ. Кӗске вӑхӑт хушшинче пынӑ çав çапӑçура Осипенко хӑех 5 нимӗçе вӗлернӗ.

Кӗçӗн лейтенант Смоль ертсе пыракан 14 боец çирӗплӗхӗн тӗслӗхне кӑтартса панӑ. Вӗсем лайӑх наблюдательнӑй пункт пулса тӑракан пӗр çурта, сӑртра вырнаçса лараканскере, хӳтӗленӗ пулнӑ. Çав çурта совет воинӗсем, кӗтмен çӗртен пырса тапӑнса, тин кӑна йышӑнса илнӗ. Фашистсем, питех те лайӑх позицисене çухатса, вӗсене каялла тавӑрма темиçе хутчен те тапӑнса пӑхнӑ. Кун каçиччен нимӗçсем ик-виçӗ хутчен контратака тунӑ, çурт çине татти-сыпписӗр минӑсемпе снарядсем тӑкнӑ. Виçӗ кун хушшинче нимӗçсем çав çурт çине 300 снаряд ытла кӑларса янӑ. Анчах нимӗçсем тӑрӑшни ахалех пулнӑ. Паттӑрсен пысӑк мар ушкӑнӗ иксӗлми çирӗп тӑнӑ.

Пирӗн артиллеристсем тӑшмана питех те тӗл тивертсе аркатаççӗ. Вӗсем наступлени туса пыракан пехота валли çул уçаççӗ, тӑшманӑн контратакисене вӑйлӑн сире-сире пӑрахаççӗ.

Е. КОРЯВИЧЕВ.

Пирӗн землянксем

Чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ

Фашистсен йытккӗтӗвӗсене хирӗç пыракан аслӑ çапӑçура вырӑссемпе чӑвашсем, украинецсемпе казахсем, белоруссемпе узбексем, пирӗн Çӗршывӑн мӗнпур халӑхӗсен ывӑлӗсем алла-аллӑн тӑрса çапӑçаççӗ. Вӗсенчен кашни çапла шухӑшлать: эпӗ хӑнта, фронтра, хамӑн килсутра, хамӑн яла, хамӑн ачасене хӳтӗлетӗп: эпӗ хамӑн тӑван çӗршыва — совет çӗршывне хӳтӗлетӗп.

Николай Лукошкин—ирӗклӗхе юратакан чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ хӑйӗн юлташӗсене час-часах çапла калать:

— Эпӗ хаярран çапӑçап, эпӗ хамӑн орденлӑ Чӑваш çӗршыва, хамӑн [illegible] колхоза намӑса кӑлармӑп.

Нумаях пулмасть нимӗçсен пӗр ушкӑнӗ пирӗн рубеж патнелле тапӑна пуçланӑ. Ухӗр фашистсен кӗтӗвӗ малалла ишӗлнӗ.

Старши сержант Николай Лукошкин дзотра, хӑйӗн хӑвачӗ пирки иккӗленмесӗр, лӑпкӑн ларнӑ. Çавӑн пек кӗтсе ларнӑ вӑхӑтра вӑл хӑйӗн юлташӗсене çапла каланӑ:

— Ан тив, ирсӗрсем сывӑхарах килччӗр..: Эпир вӗсене кӑтартӑпӑр! Вӗсем пирӗн çӗр тӑрӑх нумаях çӳреймӗç.

Лукошкин расчетӗнчи пулеметчиксем хӑйсем пуррине палӑртман. Вӗсем, нимӗçсене 100 метра çывӑха пыма панӑ та, унтан хӑйсен пулеметне ӗçлеттерме тытӑннӑ. Фашистла вӑрӑ-хурахсене тӳрремӗнех тӗллесе пере-пере пӑрахнӑ.

— Тӑван çӗршывшӑн! — тесе кӑшкӑрнӑ Лукошкин, фашистсем çине çӗнӗрен те çӗнӗ черетпе тӑхлан сапса.

— Сталиншӑн! — татах вӗркӑнать [illegible] фрицсен пуçӗ çине тӑхлан.

[illegible]

Çапӑçу хыççӑн Лукошкин патне дивизи командирӗн политика енӗпе ӗçлекен заместителӗ Оньков юлташ пынӑ. Вӑл хастар пулеметчика ыталаса чуп тунӑ та, унӑн ячӗпе сехет парса наградӑланӑ. Командовани ӑна Правительство наградине пама тӑратнӑ.

Чӑваш халӑхӗн шанчӑклӑ ывӑлӗ Николай Лукошкин сӗмсӗр тӑшманпа çакӑн пек паттӑррӑн çапӑçать. Унӑн чапӗ пӗтӗм дивизире сарӑлнӑ.

Лукошкин 19 çулта кӑна-ха. Унӑн çемьи Вӑрнар районӗнчи Уравӑш ялӗнче пурӑнать.

Пысӑк тав сире, аппӑш-аммӑшӗсем, çакӑн пек паттӑр ывӑл пӑхса çитӗнтернӗшӗн.

Старши лейтенант Я. КРАСНЕР.

ОБОРОНА ӖÇНЕ ВӖРЕНЕÇÇӖ

ШАХАСАН. Шӑхальри «Гигант» колхозра ПВХО тата ГСО значокӗсен нормисене пама вӗренмелли кружоксем йӗркеллӗ ӗçлеççӗ. Вӗсене И. Евлампьев юлташ ертсе пырать. Унта 47 çын çӳрет.

В. ЯКОВЛЕВ.

ЛАЙӐХ ПУÇАРУ

Пирӗн колхозсемпе машинно-тракторнӑй станцисене çуракине хатӗрленес ӗçре вӗсен çывӑхӗнчи предприятисем пулӑшма пултараççӗ. 1942 çулти çуркунне Канашри вагонсем юсакан заводри тата депори рабочисем хӑйсен çывӑхӗнчи колхозсен ялхуçалӑх машинисемпе инвентарӗсене юсаса пачӗç. Заводри комсомолецсемпе çамрӑксем кӑçал та çавӑн пек тума йышӑннӑ. Вӗсем республикӑри ытти предприятисен коллективӗсене те хӑйсенчен пример илме чӗнчӗç.

Çак кунсенче Куславкка комбинатӗнчи рабочисен, служащисен тата инженерла-техникла работниксен пухӑвӗ пулса иртнӗ. Унта вӗсем колхозсемпе МТС-сене çуракине хатӗрленес ӗçре пулӑшас пирки сӳтсе-явнӑ. Комбинат коллективӗ тракторсемпе ытти машинӑсене юсама пулӑшас тӗлӗшпе Куславкка МТС-не шефа илнӗ, ялхуçалӑх инвентарӗсене юсанӑ вӑхӑтра колхозсене тимӗрçӗсемпе слесарьсен бригадисене яма йышӑннӑ.

Канаш заводӗнчи çамрӑксемпе Куславкка комбинатӗнчи рабочисен пуçарӑвӗ—колхозсемпе МТС-семшӗн питех те усӑллӑ ӗç. Çак примера ытти районсемпе предприятисенче те сармалла. Республикӑри кашни предприяти колхозсемпе МТС-сене çуракине хатӗрленес ӗçре хӑйсен пулӑшӑвне парӗç.

Фронта ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене вӑйлатнипе ответлер

ВӐРМАР, декабрӗн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Декабрӗн 5-мӗшӗпе 10-мӗшӗ хушшинче районри колхозсем хатӗрлев пунктне 140 тонна тырӑ леçрӗç. Ӗнер колхозсем государствӑна 13 тонна тырӑ пачӗç. Колхозниксемпе колхозницӑсем Хӗрлӗ Çар воинӗсен çӗнтерӗвӗсем çине ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене хӑвӑрт вӗçлессишӗн куллен хӗрӳллӗн ӗçленипе ответлеççӗ. Çак кунсенче Сталин ячӗпе тӑракан, «Красная Кубня», «Свобода», «Красная горка», «Ударник» тата ытти нумай колхозсем государство умӗнчи пур парӑмсене те пӗтӗмӗшпех парса татрӗç, авӑн çапса пӗтерчӗç.

[illegible]

Фронта çӗршыва вӑйлӑ пулӑшу парассишӗн колхозниксем вӑй шеллемесӗр, вӑхӑта пӗлмесӗр ӗçлеççӗ. Колхозниксен тархатарлӑ ӗçне пула кӑçал район ялхуçалӑхӗнчи ӗçсене ӑнӑçлӑн вӗçлесе пырать. Паянхи куна Вӑрмар районӗнчи 26 колхоз государствӑна тырӑ тата ытти парӑмсене те парса татрӗç, МТС счечӗсем тӑрӑх натуроплата тыррине район 97 процент пачӗ. Районри 55 колхозран 31-ӗшӗ авӑн çапса пӗтернӗ хыççӑн вӑрлӑхлӑх клевера шӗкӗлчеме хӗрӳллӗн тытӑнчӗç.

Колхозсем умӗнче, пӗтӗм колхозниксемпе колхозницӑсем умӗнче паян тӑракан задачӑсем çакӑн пек: авӑна хӑвӑртрах çапса пӗтермелле, юлнӑ 24 колхозра авӑн çапас ӗçе тӗпренех вӑйлатмалла; [illegible]

[illegible] 1942 çулхи ялхуçалӑх ӗçсене çӗнӗ çулччен вӗçлемешӗн мобилизацилемелле.

А. СМИРНОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Çамрӑксем хушшинче ӗçлемен çӗрте

«Труженик» заводра кӑçал çӗнӗрен 100 çын ытла ӗçлеме кӗнӗ. Вӗсем пурте те пӗр пекех 16—20 çулхи çамрӑксем.

Çамрӑк рабочисем икӗ-виçӗ уйӑх хушшинчех кӑткӑс профессисене вӗренсе çитрӗç. 16 çулхи А. Кандышев токарь специальноçне, Н. Ерофеев столяр специальноçне вӗренсе алла илчӗç. Ерофеев юлташ халӗ хӑй тӗллӗнех сӗтел-пукансем тӑвать.

15 çулхи Владимир Киселев кӑçалхи çуркунне моториста вӗренме тытӑннӑ. Киселев юлташ халӗ моториста çеç мар, хӑма çурас ӗçе те вӗренсе çитнӗ. Юлашки вӑхӑтра вӑл мастер вырӑнӗнче ӗçлеме пуçларӗ.

Анчах завод руководителӗсем пулӑшу паман тата ӗçпе пурнӑç условийӗсене лайӑхлатассишӗн тӑрӑшман пирки çамрӑк рабочисенчен чылайӑшӗ ӗçрен пӑрахса каяççӗ. Халӗ заводра кӑçал ӗçлеме пуçланӑ рабочисен 40 процентӗ çеç ӗçлет, ыттисем заводран тухса кайнӑ.

Комсомолсен заводри организацийӗ кун çинчен пӗлет-и? Вӑл çамрӑк рабочисем хушшинче мӗнле ӗçсем туса ирттернӗ?—тесе ыйтсан, комсомолӑн пуçламӑш организаци секретарӗ Сулев юлташ усӑмлӑ мар ответлет.

Çакӑ ӗнтӗ комсомол организацийӗ çамрӑксем хушшинче ӗçлессине манӑçа хӑварнине, производство ыйтӑвӗсемпе интересленменнине çирӗплетсе парать.

Заводри парторганизаци те çамрӑк рабочисем хушшинче дисциплина сӳрӗккине пӗлет. Темшӗн вара ӗçе лайӑхлатма тӑрӑшмасть.

Заводра пример кӑтартса ӗçлекен стахановецсем, ВКП(б) тата ВЛКСМ ретне илме тивӗçлӗ çынсем сахал мар. Заводри партипе комсомол организацийӗсен çамрӑк рабочисем хушшинче куллен ӗçлемелле, политикӑллӑ ӗçе вӑйлатмалла.

Х. ЛИСИН.
ÇӖМӖРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр).

Ют çӗршывсенче

Папен çине „тапӑннӑ" тесе кӑларнӑ провокаци намӑслӑн путланса ларать

Хӑйне асаплантарнӑ пирки совет гражданӗсене хирӗç суйса каланисене айӑпланакан Сулейман пӑрахӑçа кӑларнӑ

АНКАРА, декабрӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Паян Папен çине «тапӑнни» текен ӗçе иккӗмӗш хут пӑхса тухакан Анкарари судӑн ирхи ларӑвӗнче айӑпланакан Сулейман кӗтмен çӗртен сӑмах каланӑ, вӑл хӑй малтан панӑ показанисене пурне те пӑрахӑçа кӑларни çинчен пӗлтернӗ. «Эпӗ сире, судья господинсем, малтанхи пек текех улталамӑ пултараймастӑп тата улталамӑ шутламастӑп та, — тенӗ Сулейман. — Манӑн малтанхи сӑмахсене пурне те Абдурахман шухӑшласа кӑларнӑ. Мана çав сӑмахсене ирӗксӗрех калаттарчӗç, мана ирӗксӗрех суйтарчӗç. Малтанлӑха следстви тунӑ чухне мана хӗнерӗç, мана 6 кун та 6 çӗр хушши шыв памарӗç тата çывӑрма май памарӗç. Эпӗ чӑтса тӑраймарӑм, вара юлашкинчен суя показани пама килӗшрӗм. Эпӗ çапла калатӑп: чӑннипе илсен, эпӗ хамӑн пурнӑçра нихӑçан та Совет посольствинче пулман, эпӗ посольство сотрудникӗсене нихӑшне те пӗлместӗп, эпӗ Павловпа тата Корниловпа нихӑçан та тӗл пулман тата вӗсене палламан, вӗсене Абдурахманпа паллаштарман. Эпӗ малтан каланисем пурте суя, суя татах та суя. Малалла эпӗ çапла калатӑп: взрыв пулнӑ чухне вилнӗ çын вӑл пачах та Омер мар, мӗншӗн тесен Омера эпӗ взрыв пулнӑ хыççӑн куртӑм, çак факта свидетельсем тӑратса та кӑтартса пама пултаратӑп. Эпӗ йӑлӑнсах мана тӑлмач пама ыйтатӑп, мӗншӗн тесен турокла ӑнлантарса пама мана йывӑр. (ТАСС хушса çырни: Сулейман наци енӗпе босниец). Вара эпӗ çак ӗçӗн пӗтӗм вӑрттӑнлӑхӗсене уçса парӑп тата эпӗ халӗ тӗрӗс каланине çирӗплетсе парӑп».

Çак сенсациллӗ сӑмаха Сулейман, халиччен суд заседанийӗнче чӗнмесӗр тӑнипе палӑрнӑскер, хытӑ кӑшкӑрса тата питӗ ӑнланмалла каланӑ, вӑл питӗ хумханса тата ӗненсе каланӑ сӑмахсем судра пулнисене пурне те тӗлӗнтернӗ. Залри халӑх шавлама тытӑннӑ, зал тӗлӗнсе калаçнисемпе тулса ларнӑ. Судьясем тата прокурор заместителӗ Кемаль Бор çухалса кайса тата хумханнипе кӑвакарса кайнӑ. Папен çине «тапӑнни» текен ӗçе, çак «ӗç» тавра нумай уйӑхсем хушши пулса пынӑ пӗтӗм провокацие, совет гражданӗсене хирӗçле провокацие пӗрре çапсах ӳпӗнтерсе янӑ событи вӗсен куçӗ умӗнчех пулса иртнине ӑнланса илнӗ журналистсем те хумханма тытӑннӑ.

Малтанах хӑраса ӳкнӗ хыççӑн тӑна кӗрсе, Кемаль Бор суда çапла каланӑ: эпӗ Сулеймана ӗненмелле мар тесе ыйтатӑп, вӑл Павловпа Корниловӑн влиянине лекнӗ «пулмалла», Сулейман калани Анкарари тӗрмере дисциплина питех те чаккине çеç кӑтартса парать, тенӗ. Прокурор çак сӑмахсене хумханса тата кӑшкӑрса каланӑ, кӑшкӑрнисемпе тата хӑлаçланнисемпе суда тата халӑха ӗнентерме хӑтланнӑ, анчах та, пурте Сулейманӑн сӑмахӗсене вӑйлӑн ӗненсе тӑнине курса, айӑпланакан пӗтӗмпех вӑйран тухнӑ та калӑх умӗнчех макӑрса янӑ.

Сулейман çийӗнчех прокурора ответ панӑ: «Мӗн калать унта прокурор Тӗрмере эпӗ вырӑссене пӗрре те курман, мана унта тӑр пӗччен лартнӑ. Мана 6 талӑк хушши шыв памасӑр тата çывӑрма май памасӑр тытни çинчен прокурор каласа парсан, лайӑхрах пулать. Анчах эпӗ текех улталас мар тесе шут тытрӑм. Мана тӗрмере 20 çул хушши лармалла тусан та, эпӗ текех улталама пӑрахатӑп, халӗ эпӗ тӗрӗссине çеç калап. Судран йӑлӑнса ыйтатӑп: мана тӑлмачӑ парӑр, вара эпӗ пурне те çирӗплетсе паратӑп».

Сулейман темиçе хут ыйтнӑ пулин те, суд ӑна тӑлмачӑ памалла мар тесе йышӑнать.

Суд залне каллех лекнӗ гитлерла агент «защитник» Карачай Абдурахмана темӗскер вуласа парать, кун хыççӑн лешӗ ыйхӑллӑ çын пек хӑй малтанах вӗреннӗ темиçе пуплеве тепӗр хут каласа парать. Сулейман вырӑссен «влиянине» лекнӗ пулмалла, тет. Абдурахман хӑйне тыткаланинчен курӑннӑ тӑрӑх, пӗтӗм провокаци мӗнле намӑслӑн путланса ларнине вӑл та ӑнланса илнӗ.

Суд председателӗ икӗ сехетчен перерыв туни çинчен пӗлтерет.

США-ри республикӑллӑ партин национальнӑй комитечӗн çӗнӗ председательне суйлани

ШПЕНГЛЕР ИЗОЛЯЦИОНИСТСЕНЕ ХИРӖÇ ТУХСА КАЛАНА

НЬЮ-ЙОРК, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). США-ри республикӑллӑ партин национальнӑй комитечӗн Сен-Луири ларӑвӗнче комитетӑн председателӗ пулма конгресс членӗ Мартин Гаррисон вырӑнне Шпенглера суйланӑ. Шпенглер хӑйӗн профессийӗпе юрист, вӑл Айова штатӗнчен. Нумай çул хушши вӑл республикӑллӑ партин активлӑ деятелӗ пулнӑ. Чи сылтӑмри изоляционистла элементсем çав ларура сенатор Стасс ертсе пынипе комитет председателӗ пулма Чикагори юриста Фредера суйлассишӗн вӑйлӑн кӗрешнӗ. Фредер, Япония Пирл-Харбор çине пырса тапӑниччен, изоляционистла позици йышӑнса тӑнӑ. Юнайтед пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Уилки майлӑ тӑракан çынсем Фредер кандидатурине хирӗç тухса каланӑ. Çавӑн хыççӑн вара национальнӑй комитетӑн председателӗ пулма Шпенглера суйланӑ.

ЛОНДОН, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин Нью-Йоркри корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, республикӑллӑ партин национальнӑй комитечӗн çӗнӗ председателӗ Шпенглер изоляционизма хирӗç питех те çирӗппӗн тухса каланӑ.

ТУНИСРИ ВӐРÇӐ ӖÇӖСЕМ

ЛОНДОН, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Çурçӗр Африкӑри союзлӑ вӑйсен командованийӗн штабӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Англи авиацийӗпе флочӗ активлӑн кӗрешнине пула тӗнӗл держависем Туниса çӗнӗ вӑйсем илсе пырасси чакрӗ пулмалла. Союзниксен командованийӗ Тебурда секторӗнче çӗр çинчи войскӑсемпе авиаци нумай пухса тӑратать. Америка танкӗсем нимӗçсене вӗсем декабрӗн 7-мӗшӗнче Тебурдаран кӑнтӑралларах вырӑнта тытса илнӗ позицисенчен каялла чакарнӑ.

Рейтер агентстви çапла пӗлтерет: союзниксен пехоти декабрӗн 9-мӗшӗнче Тебурда районӗнче моторизованнӑй чаçсем пулӑшса пынипе икӗ контратака туса кӑшт малалла куçнӑ.

Тунисӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑç районӗнче çӗр çине парашютлӑ войскӑсем аннӑ. Çав войскӑсем Тунис хулинчен пӗр 16 километрта выртакан районра противника çухатусем тӳстерсе малалла куçнӑ.

ЛИВИ ФРОНТӖНЧЕ

ЛОНДОН, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Англин çывӑхри Хӗвелтухӑçӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен командованийӗ çапла пӗлтерет: Англи войскисен патрулӗсем тата артиллерийӗ активлӑн кӗрешсе, Эль-Агейла районӗнче противника тӑтӑшах кансӗрлеççӗ.

Англи авиацийӗ çапӑçу хирӗ тӗлӗнче ӗнер те активлӑн кӗрешнӗ. Противникӑн темиçе самолетне персе ӳкернӗ е сиенленӗ.

АНГЛИ АВИАЦИЙӖ ТУРИНА ТАПӐННИ

ЛОНДОН, декабрӗн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, декабрӗн 10-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле бомбардировщиксен пысӑк соединенийӗсем Турина тата тепӗр хут тапӑннӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Йӗлтӗр çине!

Хӗл пуçланчӗ. Кавказри сӑртсем хушшинче, сӑрт тӳпипе иртекен сукмаксем тӑрӑх тата Инçетри Çурçӗрте пирӗн йӗлтӗрçӗ-автоматчиксен малтанхи отрячӗсем нимӗçсен фашистла бандисене хирӗç çапӑçу пуçласа ячӗç. Нимӗçсен çӗршер салтакӗсем малтанхи юр çинче хӑйсем валли вилӗм шӑтӑкӗ тупрӗç.

Часах ак, пӗлтӗрхи пекех, Хӗрлӗ Çар боецӗсем, йӗлтӗрсем çине тӑрса, вахватчиксен тылне кӗрсе кайӗç, тӑшманӑн базисене аркатма пуçлӗç, унӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтере-пӗтере тӑкӗç.

Хӗллехи вӑрçӑра йӗлтӗр питех те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Йӗлтӗрпе лайӑх çӳреме пӗлекен боецсем хӑйсенчен темиçе хут йышлӑрах тӑшмана та çӗмӗре-çӗмӗре тӑкнӑ, тӑкаççӗ те. Хӗвеланӑç фронтӗнчи çапӑçусенчен пӗринче нимӗçсем, пирӗннинчен темиçе хут пысӑкрах вӑй пухса тӑратса, наступлени тума хатӗрленнӗ. Нимӗçсем наступлени тӑвассине чарса лартас шутпа, пирӗн командовани вӗсене тылран пырса çапма йӗлтӗрçӗсен командине янӑ. Йӗлтӗрçӗсен Старков ертсе пыракан команди пӑч-тӗттӗм пулса çитсен, фронт линийӗ урлӑ каçнӑ та тӑшмана хӑйӗн пӗртен-пӗр коммуникацийӗнчен уйӑрнӑ. Нимӗçсем вара ирӗксӗрех хӑйсен тылӗнчи районсене тасатма фронтран 2 батальон салтака уйӑрса янӑ. Анчах нимӗçсен пехотине пирӗн йӗлтӗрçӗсемпе çапӑçма çапах çӑмӑл пулман. Йӗлтӗрçӗсен отрячӗ нимӗçсен тылне темиçе кун хушши хӑрушлӑх кӳрсе тӑнӑ. Вилнисене çеç шутласан та, тӑшман çавӑнта хӑйӗн 300 ытла салтакӗпе офицерне çухатнӑ. Йӗлтӗрçӗсем боевой задачӑна калама çук лайӑх пурнӑçланӑ.

Йӗлтӗр çине! Йӗлтӗрпе çӳремелли асталӑха тӗплӗн вӗренсе, йӗлтӗр çинчех çапӑçури мӗнпур операцисене пурнӑçлама хӑнӑхмалла. Пирӗн боевой задача —вӑрçӑн иккӗмӗш хӗлӗ валли йӗлтӗрпе лайӑх çӳреме пӗлекен темиçе çӗр пин боец хатӗрлесси. Çакӑ вӑл Хӗрлӗ Çар валли йӗлтӗрçӗсен резервне хатӗрлеме халех тытӑнмаллине пӗлтерет.

Халӑха йӗлтӗрпе çӳреме тата вӑрçӑ ӗçне вӗрентессине кӑçал профсоюз, комсомол тата физкультура организацийӗсем туса ирттереççӗ.

Йӗлтӗрçӗсем хатӗрлес ӗçӗн пахалӑхӗ çине уйрӑмах тимлӗн çавӑрӑнса пӑхмалла. Йӗлтӗрçӗ-боец вӑл—йӗлтӗрпе çӳрессин пур тӗрлӗ ӑсталӑхне те пӗлекен, кӑнтӑрла та, çӗрле те, хаяр сивӗре те, тем тӗрлӗ тӑман вӗçтерсе тӑнӑ чухне те йӗлтӗрпе çӳреме пултаракан çын пулмалла. Вӑл çырма-çатра урлӑ, темӗн йышши чӑрмавсем урлӑ çӳреме пултармалла. Йӗлтӗрçӗ-боец вӑл—чи лайӑх разведчик. Вӑл кирек мӗнле вӑхӑтра та, хуть те мӗнле çанталӑкра та хӑйне тупма хушнӑ вырӑна чи кӗске çулпа кайса, тӑшман сиссе ӗлкӗриччен шыраса тупмалла. Унӑн картӑпа тата компаспа усӑ курма пӗлмелле, хуть те мӗнле вырӑнта та çухалса каймалла мар, хӑй ăçтине хӑвӑрт тавçӑрса илме пӗлмелле.

Пирӗн çӗршыври мӗнпур çамрӑксен, пуринчен ытла вӑтампа аслӑ шкулсенче, ремесленнӑй училищӗсенче вӗренекенсен, всевобуч боецӗсен чи лайӑх йӗлтӗрçӗсем пулма вӗренмелле. Йӗлтӗрçӗ-боецсене хатӗрлес ӗçе вӑрӑма тӑсма юрамасть. Ӗçрен пушаннӑ хыççӑнхи кашни сехетпе йӗлтӗрпе çӳреме вӗренес, тренировка тӑвас çӗрте усӑ курмалла. Йӗлтӗрпе çӳрес ӗçӗн техникине —йӗлтӗрпе сӑрт çине хӑпарма, сӑрт çинчен анма, ярӑнса аннӑ çӗртех йӗлтӗрпе йӗлтӗре чарса лартма, çавӑрӑнма, йӗлтӗр туйисемсӗрех çӳреме, йӗлтӗрпе пынӑ чухнех хырӑмпа шӑвма вӗренмелле.

Йӗлтӗрçӗ-боецӑн тӳсӗмлӗ пулмалла. Унӑн инçе çула çӳреме хӑнӑхас пулать, темӗнле йывӑр условисенче те йӗлтӗрпе пынӑ çӗртех тӑшманпа çапӑçма кӗме хатӗр пулмалла.

Йӗлтӗрçӗсен чаçӗсем кӗрешӳре çӗнтересси тӑшман çине кӗтмен çӗртен пырса çапнинчен тата йӗлтӗрпе çӳрес ӗçӗн хӑвӑртлӑхӗнчен килсе тухать. Çавӑнпа йӗлтӗрпе лайӑх çӳреме, чӑтӑмлӑ пулма хӑнӑхмалла, йӗлтӗрпе кайнӑ чухне çар сыннисене паракан мӗнпур япаласене йӑтса çӳреме хӑнӑхмалла. Çакна тӑвас тесен, йӗлтӗр çинче эрнере икӗ хутран кая мар вӑрçӑ обстановкине çывхартнӑ занятисем туса ирттермелле. Йӗлтӗрпе çӳрессине хӑнӑхса пынӑ май йӗлтӗрçӗн хӑвӑртрах, инçерех çула çӳреме тытӑнмалла, арçынсен 10 — 20 километрлӑ, хӗрарӑмсен 5—10 километрлӑ переходсем туса ирттермелле. Çавӑн пекех йӗлтӗр пайӗсене, ӑна юсамалли тата ура çумне çирӗплетсе хумалли майсене вӗренмелле, йӗлтӗре ытлашши якаласран тата шӑнасран сыхламалла.

Умра пысӑк ӗçсем тӑраççӗ. Вӗсене пурнӑçлас тесен, профсоюз, комсомол тата физкультура организацийӗсен çамрӑксене йӗлтӗрпе çӳреме вӗрентес ӗçе физкультура енӗпе ӗçлекен кадрсене явӑçтармалла. Курссем организацилесе тата тӗрлӗ семинарсенче темиçе пин обществӑллӑ инструкторсем, йӗлтӗрçӗсен командисемпе отрячӗсем валли командирсем чылай хатӗрлемелле.

Йӗлтӗр станцийӗсемпе базисене тӗплӗн юсаса хатӗрлес пулать, вӗсене культурӑллӑ йӗркене кӗртмелле, вӗсенче йӗлтӗр инвентарӗсене лайӑх упраса тӑмалла тӑвас пулать.

Кӑçал йӗлтӗр сезонне лайӑхрах кӗтсе илтӗмӗр. Анчах та чи кирли—предприятисемпе учрежденисенче, колхозсенче йӗлтӗрçӗсен командисемпе отрячӗсене йӗркелесси паянхи кунччченех начартарах пулса пырать-ха. Ку ӗç хӑй тӗллӗн пулса пырассине шанмалла мар. Чи кӗске вӑхӑт хушшинче командӑсемпе отрядсем организацилесе çитермелле.

Кӑçалхи хӗлре йӗлтӗрçӗ-боецсене хатӗрлес тӗлӗшпе тумалли тӗп тӗллев —вӗренӳри тренировкӑллӑ ӗçе тӑтӑшах туса пырасси пулать.

Массӑллӑ ӑмӑртусене хутшӑнтарма йӗлтӗрпе çӳреме çителӗклӗ вӗренеймен çынсене те «туртса кӑларассине» хирӗç кӑçал татӑклӑн кӗрешмелле. Ӑмӑрту вӑл—ху шутланӑ тӗллев мар, ӑмӑртура йӗлтӗрçӗпе йӗлтӗрçӗсен командин, отрячӗн, коллективӗн вӗренӳ ӗçӗн пахалӑхне тӗрӗслеççӗ.

Йӗлтӗрçӗсене хатӗрлемелли программӑна мӗнпурӗ те 20 сехетлӗхе çеç тунӑ. Вӗренӳ вӑрçӑ обстановкинче кирлӗ пулакан приемсене йӗлтӗр çинчех тума пултарнине тӗрӗсленипе тата арçынсене 3 — 10 километрлӑ, хӗрсемпе хӗрарӑмсене—2—3 километрлӑ походсене хутшӑнтарнипе вӗçлемелле. Испытанисем вӑхӑтӗнче лайӑх результатсем илесси кашни йӗлтӗрçӗн, кашни командӑн, отрядӑн задачи.

Темиçе çӗр пин лайӑх вӗреннӗ йӗлтӗрçӗ-боецсем хатӗрлер! Çакна тума пирӗнтен фронт ыйтать!

В. СНЕГОВ,
СССР Совнаркомӗ çумӗнчи физкультурӑпа спорт ӗçӗн Пӗтӗм Союзри Комитечӗн председателӗ.

Наркомсобес Чувашской АССР доводит до сведения инвалидов отечественной войны о том, что выездная бригада Канашской протезной мастерской будет работать в г. Чебоксарах в 1—2, в гор. Алатыре 15—16 числах каждого месяца и в гор. Канаше ежедневно, кроме выходных дней.

Все нуждающиеся в протезах инвалиды должны получить наряды на протезы от Райсобесов.

НАРКОМСОБЕС.

Чебоксарской телефонной станции требуются экономист и ученики-надсмотрщики (желательно девушки).

Обращаться по адресу: Чебоксары, дом связи, комната 24. Телефон № 0—74.

Сюктерскому д/о заводу требуются главный бухгалтер, бухгалтера.

Жилплощадь предоставляется, имеется столовая.

С предложением обращаться: г. Чебоксары, ул. Ленина, 64, к главному бухгалтеру.

Дому Красной Армии требуются: бухгалтер, киномеханик, шофер, художник и истопник.

Утерянную гербовую печать, принадлежавшую Управлению Землеустройства, считать недействительной.

АДМИНИСТРАЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, редакци секретарӗн — 4—26, промышленность пайӗн 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1127 Типография № 1 Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п.